

## *Кузьма Турхан*

### ПУЛЕМЕТЧИК ИВАН СМИРНОВ

Пурте хисеплекен уҫӑ кӑмӑллӑ ҫынсем те пулаҫҫӗ: ун пек ҫынпа калаҫсан вара сан мӗнпур хуйху-суйху иртсе каять, кӑкӑра темле уҫӑ сывлӑш пырса кӗрет, чӗрере чылайччен ӑшӑ туйӑм сыхланса юлать. Туртать ҫак ҫын сана хӑй патне, унпа нумайлӑха тата ҫывӑхрах туслашас килет. Тепӗр чухне ҫак ҫын сирӗн хушшӑрта нумаях та пурӑнмасть, анчах вӑл кӗске вӑхӑт хушшинчех темӗн чухлӗ ыр кӑмӑл, лайӑх асаилӳ хӑварать.

Шӑп ҫакӑн пек ҫын пулнӑ аслӑ лейтенант Иван Смирнов. Ҫак ҫыннӑн темле пурне те хӑй патне туртакан магнитла вӑй пулнӑ. Чӑн ӗнтӗ, унӑн хаваслӑхӗпе хастарлӑхӗ ҫамрӑкран та килнӗ, анчах та ҫак хаваслӑх вӑл пӗрре те ҫынна ҫиелтен ҫеҫ витсе тӑракан хаваслӑх пулман, вӑл шалтан, чӗререн тухнӑ. Унӑн кашни сӑмахӗ, кашни утӑмӗ ҫак этем ҫав тери тӳрӗ кӑмӑллӑ ҫын пулнине ҫинчен калать. «Мӗн тери лайӑх ҫын, мӗн тери лайӑх командир», тенӗ боецсем,—ун хыҫҫӑн таҫта кайма та хатӗр тӑнӑ. «Мӗнле ҫамрӑк, мӗн тери тирпейлӗ, хӑйне

хӑй тыткалама пӗлекен çын», тенӗ командирсем,—ӑна кирек мӗнле ӗç шанса пама та иккӗленмен.

Çулпа вӑл чӑнах та питех те çамрӑк пулнӑ: çирӗм пӗр çул тултарса çирӗм икке çеç кайнӑ. Партине кӗнӗ чухне автобиографи çырма хушсан, вӑл ӑна чӗрӗк листа чухлӗ те çырайман: унӑн çырмалӑх автобиографи пулман. Виçӗ çул педтехникумра вӗреннӗ, виçӗ уйӑх учитель пулса ӗçленӗ, унтан çара кайнӑ — çавӑ çеç. Анчах ӗçре вӑл çамрӑк чӑрсӑрлӑхӗпе ӗçлениччен ытла ват çын сулмакӗпе ӗçленӗ. Хӑйне ахаль чухне те çирӗппӗн те йӗркеллӗ тытакансқер, вӑл ӗçре пӗтӗм чун-хавалне кӳлнӗ.

Пушӑ чухне, кану вӑхӑтӗнче вӑл чи ӑста юптаруçӑ пулнӑ. Ку тӗлӗшпе уша ӑмӑртсан та сержант Сары Базаров çеç ӑмӑртма пултарнӑ. Вӑл, Тутар республикӗнчен килнӗскер, тутарсем çинчен пит нумай кала-кала кӑтартнӑ.

Смирнов Сары Базаровпа пулемет ротине килнӗ кунах паллашнӑ, иккӗшӗ те пӗр взвода лекнӗ май часах туслашса та кайнӑ. Хӑйӗн çынна «витӗр куракан» сисӗмӗпе Смирнов часах тутар ачи Сары лайӑх ача тата маттур командир пулнине чухласа илнӗ. Сары Смирнова яланах çарти ятпа чӗннӗ, командир вырӑнне хурса хисепленӗ, çапах та Смирновпа калаçнӑ чухне шап-шур шӑлӗсене кӑтартса кулниччен, куçӗсем юратуллӑн çунса тӑниччен вӑл çӗнӗ командира питех те кӑмӑлласа пӑрахнине курма пулнӑ.

Пӗррехинче Смирновпа Базаров иккӗшӗ юнашар выртса темиçе сехет хушши нимӗçсен отделенине хирӗç çапӑçнӑ, çак çапӑçура нимӗçсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ. Çапӑçу хыççӑн темиçе сехет хушши тӑшман татах килсе тухасса кӗтсе выртнӑ. Çавӑн чухне вара вӗсем хӑйсен çуралса ӳснӗ çӗршывӗ çинчен килениччен калаçнӑ. Вӗсене çакӑ савӑнтарнӑ: Смирновсен ялӗ те, Сары Базаровсен ялӗ те Кӗтне хӗрринче ларнӑ. Сары вара Кӗтнене час-часах аса илнӗ.

— Вӑрçӑ пӗтсен, Кӗтне хӗррине таврӑнсан, кимӗ çине ларатӑп та Çӗн Сӗнтӗре (Смирнов Комсомольски районӗнчи Çӗн Сӗнтӗртен пулнӑ) хӑпаратӑп,—тенӗ вӑл.—Эсир сӑра хатӗрлӗр вара, юлташ аслӑ лейтенант.

— Паллах, хатӗрлетӗп,—тенӗ Смирнов.—Сӑрине тупма пулӗ-ха ӑна.

Аслӑрах командирсенчен Смирнов политрук Петренкопа пит туслӑ пулнӑ. Вӗсем çинчен ротӑра боецсем:

политрукпа аслă лейтенант тăвансем пек пурăнаççĕ, тесе калаçнă. Анчах Петренко Смирновран часах ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

Ку вăл вăйлă çапăçăвăн виççĕмĕш кунĕнче пулса иртнĕ. Нимĕçсем пирĕн позицисем çине урса кайса миномётсенчен пеме тытăннă. Ниçта кайса кĕме пулман. Йĕри-тавра çĕр сирпĕннĕ. Юлташсем ўкнĕ.

— Вĕсем пире шыраса тупрĕç, халех урăх çĕре куçмалла, унсăрăн рота пĕтет,—тенĕ Смирнов. Анчах вĕçĕмсĕр персе тăнă хушăра урăх çĕре мĕнле куçмалла-ха? Пуçра часах решени çуралнă. Аслă лейтенант сулахай флангран нимĕçсен огневой точки патнелле шума тытăннă.

— Ваня, чим, ан васка,—тенĕ ăна политрук Петренко хыçалтан.—Эс мĕн, вĕсене улталасшăн-и? Анчах эс мар, эпĕ. Сарына пĕрле. Кўр автоматна. Эпир огневой точка патне çитсе çапăçма тытăннă хушăра эс маттурсемпе тепĕр енчен пырса кĕретĕн.

Смирнов килĕшнĕ: тăшман патне вăрттăн шуса пырса тапăнас ĕçре Петренко пит опытлă пулнă. Вăл май килнĕ чух нимĕçсене окопсенчен яланах çапла тĕтĕрлентерсе кăларнă.

— Çавăн пек пырса тапăннă чух вĕсен чунĕ ура тупанне анса ларать,—тенĕ вăл кулса.

Тепĕр ик минут кĕтсен, сулахайра умлă-хыçлă икĕ граната çурăлни илтĕнсе кайнă. Унтан автоматсем ĕçлеме тытăннă. Çав вăхăтра Смирнов ротăна атакăна ертсе кайнă.

— Тăшмана — вилĕм, юлташсем! Тăван çĕршывшăн! Урра! — кăшкăрнă вăл.

Хăйсен огневой точки ĕçлеме пăрахнипе кура нимĕçсем нумайччен хирĕç тăраймаи. Вĕсем, блиндажсене пăрахса, каялла тарнă. Таврана нумай гитлеровецсен виллисем выртса юлнă.

— Аçта политрук?—тенĕ Смирнов çапăçу лăпlансанах.

Сары Базаровна тепĕр боец ун патне политрук Петренкона йăтса пынă. Вăл пĕтĕмпех юнланса пĕтнĕ пулнă, хăй аран-аран сывланă. Сăмала пек хура çўçĕ юнпа йĕпенсе вăрăммăн çамки çине усăнса аннă.

Смирнов çĕре юлташĕ патне кукленсе ларнă.

— Петренко...

Петренко чӗнмен. Ун тӗксӗмленнӗ куҫӗсем пӗр тӗллевсӗр айккинелле тинкернӗ. Ҫемҫелнӗ шӑмшакӗпе вӑл пӗр хускалмасӑр, пӗр турткаланмасӑр выртнӑ.

Смирнов ӑнланнӑ: шанчӑк ҫук, вилӗм ҫӗнтерет. Вӑл Петренкона чӗркуҫҫи ҫине илнӗ. Кӳтсе, капланса килнӗ кӑмӑлӗпе ӑна тутинчен чуптунӑ. Тепӗр минутран, юлташ чӗрҫиййӗ ҫинче выртнӑ ҫӗртех Петренко сывлами пулнӑ.

* * *

Пурнӑҫра питех те йывӑр ӗҫсем пулаҫҫӗ. Ҫак чи йывӑр ӗҫсенчен пӗри вӑл — ҫырура юлташ вилӗмӗ ҫинчен пӗлтересси. Юлташу вилнӗ, кун ҫинчен ун арӑмне, ачи-пӑчисене, тӑванӗсене пӗлтермелле. Мӗнле пӗлтерӗн? Мӗнле сӑмахсемпе ҫырса ярӑн ун ҫинчен? Темле сыхланса ҫырсан та, темле лӑпкӑн пӗлтерме тӑрӑшсан та, асӑнасах пулать-ҫке-ха вилӗм сӑмаха! Ку сӑмах ҫын чӗрине аҫа-ҫиҫӗм пек пырса тивет, чун-чӗререн темле тӗреклӗ ҫынна та пумайлӑха хуҫса хӑварать.

Смирнов Петренко вилӗмӗ ҫинчен ун тӑванӗсем патне ҫав кунах ҫырса яма тӑнӑ, анчах темӗншӗн унӑн кӑна тума ал ҫитмен. Блиндажра ҫыру ҫырма ларнӑскер, вӑл сиксе тӑнӑ та штабалла утнӑ. Халиччен ялан хавасла ҫӳрекен, ялан шӳт тӑвакан аслӑ лейтенанта паян тем ҫитменнине боецсем те курнӑ, анчах нимӗн те шарламан. Халиччен унтан хӑпма пӗлмен Сары Базаров та ӑна пырса кансӗрлемен. Ҫапах та вӑл аслӑ лейтенант ҫинчен пӗрре те куҫ илмен, ун кашни утӑмне сӑнанӑ, вӑл ӑна ялanхи пек хӑй патне чӗнсе илсе ӑшшӑн калаҫма пуҫласса кӗтсе ларнӑ.

Ҫаҫпа аслӑ лейтенант тулалла тухнӑ. Базаров Сары ун хыҫҫӑн тухнӑ. Вӑл Смирнова: «Астӑвӑр, аслӑ лейтенант юлташ, ҫӗрле ан ҫӳрӗр» тесе асӑрхаттарасшӑн пулнӑ, анчах чӗнмен, вӑл мӗн тунине аякран ҫеҫ пӑхса тӑнӑ. Каялла кӗнӗ чухне Смирнов хуралт ҫумӗнче ҫын йӑпшӑнса тӑнине асӑрханӑ.

— Кам унта?—тенӗ вӑл.

— Эпӗ,—тенӗ айӑплӑн Сары.

— Син бу, Сары? — тутарла ыйтнӑ аслӑ лейтенант.—Эсӗ мӗн туса тӑратӑн?

Унтан, вӑл мӗншӗн кунта тӑнине ӑнланса илнӗ те, вӑрҫса тӑкнӑ:

— Эс ун пек хӑтланма пӑрах. Ҫын хуралӗ пулма пӑрах,—тенӗ.

Смирнов Петренко тăванĕсем патне тепĕр куние те çыру яман. Вăл çав-çавах кăмăлтан пусăрăнса, юлташĕсемпе ытлашшиех калаçăва кĕмесĕр çÿренĕ. Çыру çырасси уншăн пуç çинче тăракан ĕç пулнă, ун çинчен вăл пĕрре те манман, анчах, «кăмăл тасалтăр тесе», çыру çыриччен ăна мĕн те пулин тумалла пек туйăннă. Мĕн тумаллине Смирнов лайăх пĕлнĕ.

Вăл штаба та икĕ хутчен кĕрсе тухма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Унта ăна кĕçĕр пĕр взводпа тăшман вырнаçнă яла разведкăна кайма ирĕк панă. Вăл ку разведкăна мĕнле ирттересси пирки те малтанах калаçса татăлнă.

Смирнов хăйĕнпе пĕрле пĕтĕм взвода разведкăна илсе кайма шутланине пĕлсен, Сары Базаров савăнсах ÿкнĕ.

— Якши,—тенĕ вăл, шап-шур шăлне кăтартса кулса.—Якши.

Каçпа вĕсем пĕр пулемет, темиçе автомат тата темиçе винтовка илнĕ те вĕтлĕх витĕр çула тухса кайнă. Кĕрхи лăпкă каç тăнă. Уйăх пулман. Разведчиксене вăл кирлĕ те пулман. Ура айĕнче хытнă хăях тата тĕрлĕ курăк чăштăртатнă. Ленинград енчен (Ленинград кунтан пĕр аллă çухрăмра çеç пулнă) самаях нÿрлĕ çил вĕрнĕ.

Боецсем пĕр шарламасăр утнă. Хутран-ситрен чарăна-чарăна тăнă. Çапла вĕсем çырма урлă каçса пĕр пысăках мар ял патне пырса тухнă. Ял вĕçĕнче, ял хуралçи пек, çил арманĕ ларнă.

— Юлташ аслă лейтенант, çавăнталла кĕрер мар-и?—тенĕ Сары Базаров, арман еннелле кăтартса.—Вĕсен хурал çавăнта пулĕ-ха.

Смирнов унпа пĕр сăмахсăр килĕшнĕ. Взвод йăрансем тăрăх упаленсе ял вĕçĕнчи арман патнелле шума тытăннă. Нимĕç часовойне Смирновпа Базаров пит ăстан мăйкăчласа лартнă, лешĕ сăварне уçма та ĕлкĕреймен. Ăна икĕ боецпа тÿрех штаба ăсатнă. Кун хыççăн вара аслă лейтенант хăюллăнах арман алăкĕ патне пырса тăнă. Тул енчен итлесен, армантан нимле сас-чĕв те илтĕнмен. Вара Смирновпа Базаров икĕ боецпа армана шалалла кĕнĕ. Вĕсем часах аллисемпе улăм çинче çывăракан нимĕç салтакĕсене хыпашласа тупнă. Алсем хăвăрт ĕçленĕ, пĕр-икĕ минут хушшинче нимĕçсен ултă салтакне тирпейлесе хунă.

— Ку пулемета ил,—тенĕ Смирнов, Базарова пулемет патне илсе пырса.

Армантан мĕн илмелле пеккине илсе тухнă та вĕсем йăрансем тăрăх упаленсе малалла шунă.

Ял хĕрринчи малтанхи хуралтсем лаша витисем пулнă. Унтан хыттăн каласни илтĕннĕ, пĕри (офицер пулас) такама вăрçнă. Тата çывăхарах пырсан, Смирнов тĕттĕмре картишĕнче лашасем нумай тăнине курнă. «Кавалери»—вĕçнĕ пуçра шухăш. Ялти ытти хăшпĕр килсене пырса тĕрĕслесен, ку шухăш тĕрĕс пулни курăннă. «Халĕ ĕнтĕ пуçласан та юрать», тенĕ аслă лейтенант. Вăл хăйĕн сержанчĕсене малалла мĕн тумаллине ăнлантарса панă, лешсем ун сăмахĕсене боецсене пĕлтернĕ.

Часах пĕр пӳрте чӳречерен граната ывтăннă. Урам варринче пулемет ĕçлеме тытăннă. Хапхасенчен, чӳречесенчен нимĕç салтакĕсем сике-сике тухнă, вĕсем, çунакан вут çине пырса çапăнакан шăнасем пек, урамра тĕрлĕ çĕртен перекен пулеметсемпе автоматсем çине пыра-пыра тăрăннă. Боецсем вĕсене хăюллăн çулнă, тĕттĕмре штыксем çине çĕкленĕ. Вĕсем ялта нумай çапăçма пултарайман, анчах та кĕске вăхăтлăх паникăпа усă курса та вĕсем тăшмана нумай сиен кӳме ĕлкĕрнĕ.

Урамра юланутлă мĕлкесем курăнма пуçласан, взвод пахчасемпе ял хыçнелле чакнă, кам пуррипе çуккине тĕрĕслесе, арман айккипе вĕтлĕхе тухнă. Взводран виллĕ пĕр çын та пулман, виçĕ çын йывăр аманнă. Тĕрĕссипе, аманнисем тăваттăн пулнă — Сары Базаровăн сылтăм аллине те пуля шăйăрса кайнă пулнă, анчах Сары хăй ăна суран вырăнне хуман, ухмах пуля йăкăшпа тивнĕ, тенĕ те, аллине хыттăн çыхса лартса, çавçавах пулеметне сĕтĕрсе пынă.

Ку Смирновăн пĕрремĕш разведки пулнă. Ун хыççăн аслă лейтенант чĕри пăртак лăпланнă, вара вăл тепĕр кунне Петренко вилĕмĕ çинчен çыру çырса янă.

* * *

Фронтра ĕçсем пирĕншĕн пĕрре те килĕшӳллĕ пулман.

Тăшман, вăхăтлăх çĕнтерӳсемпе каçса кайса, пĕр чарăнмасăр малалла тапăнса кĕнĕ. Вăл Ленинград тавра вилĕм мăйкăчне тата хытăрах туртса çыхасшăн пулнă. Пирĕннисем кашни утăм çĕршĕн пĕтĕм вăйран çапăçнă, май пур чухне çине-çине контратакăсем тунă, çапах та майĕпен каялла чакнă. Боецсем пĕлнĕ: ялан кун пек

чакма май çук, тăшмана чармалла, тăшмана каялла сирме тытăнмалла! Вĕсем кĕтнĕ: ак приказ пулать те, пăр тапраннă пек тапранса каятпăр, тăшмана мĕн пурĕшĕп таварма тытăнатпăр, тенĕ. Çак вăхăт килессе кĕтсе кашни боец пулас хаяр çапăçусенче тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартма хатĕр тăнă.

Ку вăхăт çитнĕ. Мускав патĕнчеп тăшмана пружина тапса сирпĕтнĕ пек сирпĕтнĕ. Ытти фронтсенче те наступлени пуçланнă.

— А эпир? — тенĕ Ленинград фронтĕнчи боецсем.— Пирĕн те пуçламалла мар-и фрицсене хăвалама?

Ленинград патĕнче те фронт хускалнă. Хулана хальхаль пырса кĕрес пек тăнă нимĕçсем каялла чакма тытăннă.

— Юлташ аслă лейтенант, тĕрĕс-и вăл: Ленинграда халиччен нимле тăшман та илсе курман тет? — ыйтнă Сары Базаров.

— Тĕрĕс,—тенĕ Смирнов ăна хирĕç.—Пĕрремĕш Петр туса лартнăранпа ăна никам та илсе курман. Тапăнса пырасса ун çине нумай хутчен тапăнса пынă, анчах Ленинград меридианĕ пĕрре те пирĕн тăшмансене телей кӳмен, унта вĕсем пурте хăйсен вилĕмне тупнă.

— Юлташ аслă лейтенант,—çав-çавах чарăнмап Сары,—эсир усал йытă çури чипер тăракан лашана е ĕнене тапăнса вĕрнине курнă-и? Гитлер мана çавнашкал урпă йыт çури пекех туйăнать. Мĕн карать вăл çăварне пире хыпса çăтас пек?

— Тĕрĕс, Сары,—тет Смирнов,—унăн аппетичĕ хăйĕн çăварĕнчен пысăк. Ну, юрĕ-çке, часах вăл выçă çăвара мĕн кирлине чышса тултаратпăр. Ав Совинформбюро мĕнле хыпарсем пĕлтерме пуçларĕ...

Базаров хăйĕн мĕнпур шухăшне аслă лейтенанта кала-кала кăтартнă. Вăл унпа, хĕрпе калаçса ларнă пек, пĕр йăлăхмасăр темиçе сехет хушши калаçса ларма пултарнă. Калаçсан-калаçсан иккĕш пĕрле пĕр çаврăм юрă юрласа илнĕ. Вĕсен чи юратнă юрри тутарсен «Мĕншĕн, мĕншĕн сан хура куçусем тинкерсе пăхаççĕ ман çине» текен юрри пулнă. Ăна вĕсем темиçе хутчен юрланă. Вĕсем юрланă тăрăх ун кĕввине ытти боецсем те ĕнерме пикеннĕ, анчах сăмахĕсене Смирновпа Сары Базаров çеç пĕлнĕ.

— Чĕрене кайса тивекен юрă,—тенĕ вара Сары юрлама чарăнсан.—Лайăх юрăсем пур тĕнчере! Лайăх

çынна куратăн та, лайăх юрра илтетĕн те — чун ирĕлсех каять.

— Лайăх çынсем тетĕн. Анчах тĕнчене хăртса пурăнакан çынсем те сахал мар-çке,— тенĕ ăна хирĕç Смирнов.

— Лайăх çынсем ытларах.

Пĕркунхине тăшман вырнаçнă яла ăнăçлăн кайса килнине кура вĕсене час-часах разведкăна яма пуçлапă. Разведка хăрушă, анчах çав вăхăтрах çав тери интереслĕ ĕç пулнă. Кунта икĕ çамрăк хăйсен мĕнпур ăсталăхне, вăрçăри чеелĕхне кăтартнă.

Кăнтăрла кашни кун тенĕ пекех вăйлă çапăçусем пулнă. Тепĕр чухне штыкпа та кĕре-кĕре кайма тивнĕ. Смирнов икĕ хутчен аманнă — пĕрре пуçран, тепре сылтăм аларан. Чылай юн юхтарнă пулин те, иккĕшĕнче те çапăçу хирне пăрахса кайман. Боецсем ăна госпитале кайма ӳкĕтленĕ, çав вăхăтрах хăйсен юратнă командирĕ вĕсенчен ниçта та уйрăлса кайма шутламаннишĕн савăннă та.

— Сире боецсем питĕ юратаççĕ, аслă лейтенант юлташ, сирĕн мĕнле те пулин вăрттăн талант пулĕ,— тенĕ Сары Базаров, шурă шăлне кăтартса кулса. Смирнов та ăна кулăпах ответленĕ:

— Пулĕ те. Чĕре ман — поэт чĕри. Ак мĕнле,—тенĕ. Унтан вăл, пуçне мăнкăмăллăн çĕклесе, пăхмасăр сăвă калама тытăннă:

Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа вилнĕ вăл çапăçса.
Чухăнсемшĕн хăйĕн кун-çулне,
Çамрăк ĕмĕрне вăл хĕрхенмен,
Коммунизм хĕрлĕ ялавне
Чун тухиччен çĕре ӳкермен...

Аслă лейтенант çав-çавах сăвă каласа хăйĕн взводĕнчи боецсем вырнаçнă блиндажалла утнă. Паян вăл боецсене нимĕн те вуласа паман, çавăнпа паянхи хаçатсене вуласа пама васканă.

Хаçатсенче фронтри боецсемпе командирсен паттăрлăхне кăтартса паракан статьясем нумай пулнă, боецсем вĕсене питĕ юратса итленĕ. Ку паттăрлăха боецсем çапăçура хăйсем те кашни кунах курнă, ăна хăйсем тунă, анчах кашни кунхи çапăçусене вĕсем вăрçăри кулленхи пурнăç тесе шутланă пулас, пĕр-пĕр боец паттăр-

лӑхне хаçатра уйрӑммӑн илсе парсан, ӑна вара чӑн-чӑн паттӑрлӑх вырӑнне хурса йышӑннӑ.

— Вӑт ку чӑн-чӑн герой,— тенĕ вара пĕр çын темиçе фашиста тыткӑна илни çинчен е темиçе танка пĕтерсе тӑкни çинчен вуласан. Уйрӑмах вĕсем летчиксен паттӑрлӑхĕ çинчен вуланине итлеме юратнӑ. Пĕр-пĕр летчик фашистсемпе кĕрешни çинчен вуланӑ чух вĕсен куçĕсем вутла çунса тӑнӑ.

Вĕсем хӑйсем çинчен сахал пуплӑнӑ, хӑйсен паттӑрлӑхĕпе пĕрре те мухтанман. Çав вӑхӑтрах вĕсенчен кашниех герой пулнӑ. Вĕсенчен иккĕшĕн геройлӑхĕ çинчен, аслӑ лейтенант Иван Васильевич Смирновпа сержант Сары Базаров тунӑ чаплӑ ĕç çинчен каярахпа пĕтĕм фронт, пĕтĕм çĕршыв пĕлнĕ...

Хĕллехи сивĕ кун тӑнӑ. Йывӑç тӑррисене хускатмалӑх çил вĕрнĕ, ура айĕнче юр кĕленче ванчӑкĕ пек кӑчӑртатнӑ. Хĕвел çӳле хӑпарман, пӑртак çĕкленнĕ те яланхи пек хĕрӳллĕ çапӑçу пуçланасса кĕтме тытӑннӑ. Чӑнах та ирех хирĕçех пуçланнӑ çапӑçу кӑнтӑрла тĕлне çав тери хĕрӳлленсе çитнĕ. Артиллерирен чылайччен персе тӑнӑ хыççăн ик енчен те пехота атакӑна кĕнĕ. Çапӑçу нимĕçсем пĕр-ик эрне хушши алӑран пĕр вĕçертмесĕр тытса тӑнӑ Н. çутшӑн пынӑ. Ку çут пĕтĕм тавралӑхранраснах хӑпарса тӑнӑ, ун çийĕнчен пур еннелле те инçене курма, çулсене персе тӑма май пулнӑ. Малалла куçас тесен, пирĕннисен чи малтан нимĕççене çак çут çинчен хӑваласа ямалла пулнӑ, мĕншĕн тесен вӑл малалла каймалла чӑрмантарса тӑнӑ. Кӑна нимĕçсем те лайӑх пĕлнĕ, çавӑнпа вĕсем те уншӑн урса кайсах çапӑçнӑ. Çут çинче укреплениссем те тума ĕлкĕрнĕ, пирĕн наступлени тӑвакан чаççене вĕçĕмсĕр пулеметсенчен, минометсенчен персе тӑнӑ.

— Епле çине тӑраççĕ вĕсем,— тенĕ Смирнов, нимĕçсем çине пеме пулеметне вырйнаçтарса.— Ак эпир Сарыпа тытӑнсан...

Приказ тӑрӑх, наступлени тӑвакан пехотӑна пулӑшма пулемет взвочĕн çут еннелле каякан çулӑн сулахай енчен персе тӑмалла пулнӑ. Çапӑçу пуçлансан, пехота шунӑ май пулеметчиксем те хӑйсен позицийĕсене улӑштарса малалла куçнӑ.

Артиллеристсем çут çинчи нумай огневой точкӑсене пĕтерсе тӑкнӑ. Тӑвайккинче снаряд хыççăн снаряд çурӑлнӑ. Нимĕçсем чӑтса тӑраймасăр пĕчĕккĕнех каялла

чакнӑ. Пирӗн темиҫе рота ҫут тӑррине ҫитсе пӗр чарӑнса тӑмасӑр аялалла анма тытӑннӑ. Тӑшмана ҫывӑхри ял патнелле хӗснӗ.

— Ну, кам ытларах ҫине тӑчӗ? — тенӗ аслӑ лейтенант.—Сары, пӑх-ха, тӑшман вӗчине ҫапса хуҫнӑ йытӑ пекех каялла чакать.

Сары хӗрсе ӗҫленӗ. Аслӑ лейтенант еннелле ҫаврӑнса шур шӑлне кӑтартса кулса илнӗ те тата пикенерех пеме пуҫланӑ.

— Ҫитӗ,— тенӗ Смирнов.— Аякка кайрӗҫ. Ав ҫавӑнталла куҫар.— Вӑл ҫут ҫинчи ҫӗрпе хупланса ларнӑ пӗр пысӑк блиндаж ҫинелле тӗллесе кӑтартнӑ.

— Пулеметсене тӗрӗслӗр! — тенӗ Сары боецсене.— Фрицсем ак контратака пуҫлаҫҫӗ.

Анчах нимӗҫсем халех контратака пуҫламан: вӗсен контратака тумалӑх вӑй юлман. Пирӗннисем те малалла кайма чарӑннӑ. Ҫута йышӑннӑ хыҫҫӑн подкреплени илсе ротӑсене ҫӗнӗрен йӗркелемелле пулнӑ.

Смирнов взводӗнче вилнисемпе аманнисем нумай пулман. Пулеметсем юсавлӑ пулнӑ, лайӑх пенӗ. Боецсем ҫапӑҫма хатӗр тӑнӑ.

Часах Смирнова пулеметнӑй рота командирӗ чӗнсе илнӗ. Вӑл ӑна ӑшшӑн аларан тытса чӑмӑртанӑ та, куллине тута хушшине пытарса, ӗҫлӗн приказани панӑ:

— Ҫарсем йӗркеленсе ҫитсе ҫӗнӗрен наступлени пуҫличчен пире ҫак рубежа тытса тӑма хушнӑ. Эп сылтӑмра пулатӑп, эс — сулахайра. Санпа Базаров отделенийӗ пулать,—тенӗ. Унтан, кайма тесе пӑрӑнса, хушса хунӑ:

— Полк командирӗ хытӑ асӑрхаттарчӗ, тем пулсан та каялла чакмалла мар,—терӗ.

Смирнов икӗ пулеметпа ҫутӑн тӑшман енчи тӑвайккинелле аннӑ. Сары Базарова вӑл ултӑ боецпа хӑйӗнчен сулахаярах вырнаҫтарнӑ, хӑй пиллӗкӗн тӑшман тапӑнса килме пултаракан тӳрем вырӑн тӗлӗнче пӗр тӗмеске хыҫне кӗрсе выртнӑ.

Кун каҫ еннелле сулӑннӑ. Ҫанталӑк пӑртак лӑпланнӑ пек, ӑшӑтнӑ пек туйӑннӑ. Ленинград енчен ҫав-ҫавах кӳрлӗ ҫил вӗрнӗ, тинӗс инҫе марри ҫинчен аса илтернӗ.

Боецсем яланхи пекех пӗр-пӗрне тӑрӑхласа шӳт тунӑ е мӗнле те пулин «истори» каласа кӑтартнӑ. Вӗсем чылайранпа пӗрле ҫапӑҫнӑ, фронтри мӗнпур йывӑрлӑхсене пӗрле тӳссе ирттерсе, пӗр-пӗринпе чылай ҫывӑх паллашса ҫитнӗ. Тӑванӗсем ҫинчен, савнисем ҫинчен,

ҫара киличченхи пурнăҫĕ ҫинчен вĕсем мĕн калас пеккине пĕр-пĕрне пĕтĕмпех каласа панă темелле. Қама та пулин ҫыру килсен, ăна эртелпе вуланă. Вĕсен пĕр-пĕринчен пытармалли нимĕн те пулман: савăнăҫа та, хуйха та пĕрле тÿссе ирттернĕ. Аслă лейтенант Смирнов та боецсемпе пĕрле савăннă, вĕсемпе пĕрле хуйхăрнă. Ҫыру илсен, ăна ыттисене те вуласа панă. Паян ирхине ăна штабра ҫыру тыттарнă пулнă. Вăл вăхăт пулманнипе ку ҫырăва вуласа та тухман-ха. Ҫакна аса илнĕ те аслă лейтенант кĕсйинчен виҫĕ кĕтеслĕ туса хутлатнă ҫыру кăларнă.

— Ман ҫыру вулас-ха,— тенĕ вăл.— Пиччерен ҫыру илнĕччĕ.

Чăнах та ҫыру Смирновăн Куля ятлă пиччĕшĕнчен пулнă. Вăл ăна хăй фронтра нимĕҫ оккупанчĕсене хирĕҫ ăнăҫлăн ҫапăҫни ҫинчен пĕлтернĕ

— Мейĕр, вуласа пăхăр,—пиччĕш ҫырăвне боецсене панă Смирнов. Ҫыру алăран алла кайнă, ăна кашниех пĕр сассăр вуласа тухнă.

— Вăл сирĕн шăллăр-и е пиччĕр-и? — ыйтнă боец Петров.

— Пичче. Вăталăх пичче. Қам пĕлет,— кулса илнĕ вăл,—тен, йĕкĕреш те пулĕ. Ялта пире йĕкĕреш, тетчĕҫ. Эпир ялта чухне унпа йĕкĕрешсем пек ялан пĕрле ҫÿреттĕмĕр. Патăръелĕнчи педтехникума та пĕрле вĕренме кĕтĕмĕр, пĕрле вĕренсе тухрăмăр. Фронта ҫеҫ пĕрле килеймерĕмĕр.

Смирнов пиччĕш ҫинчен тата та каланă пулĕччĕ, анчах ҫав вăхăтра ҫывăхрах снаряд ÿксе ҫурăлнă сасă илтĕннĕ. Қăна нимĕҫсем пенĕ. Боецсем ăнланнă: тăшман контратака тума хăтланса пăхасшăн. Нимĕҫсем ял енчен пĕтĕм пĕвĕпе тăрса утса килнĕ.

— Курăр, курăр,— тенĕ аслă лейтенант,— вĕсем психически атака тăвасшăн.

Тăшман ҫывхарнăҫем ҫывхарса пынă. Хăйсем ҫине ниҫтан та пеменнине кура, ÿсĕр нимĕҫ салтакĕсем хăюллăн малалла утнă. Ҫак вăхăтра Смирнов нимĕҫсене хăй ăҫта вырнаҫса тăнине кăтартасшăн пулман. Боецсем ҫĕр ҫумне йăпшăннă. Аслă лейтенант Базаров сиgнелле пăхса илнĕ, аяккарах вырнаҫнă пулин те, уп расчĕчĕ те тăшман ҫывхарасса кĕтсе выртнă. Смирнов ăна мĕнле те пулин сăмах каласа хăпартлантарасшăн е кăшкăрса кăмăлне ҫĕклесшĕн пулнă, анчах халь ĕнтĕ ăна тума

юраман. Нимӗҫсем ҫав-ҫавах пӗтӗм пӗвӗпе сӑрт ҫинелле хӑпарнӑ.

— Маттурсем, мӗнле? — тенӗ Смирнов боецсене.

— Эпир хатӗр,—ответленӗ вӗсем.

«Маттурсем» тенӗрен аслӑ лейтенант Петренко политрука аса илнӗ, унӑн ҫан-ҫурӑмӗ пӗҫерсе кайнӑ. Аллисемпе гашетка ҫине пуснӑ та команда панӑ:

— Огонь!

Ҫывӑхах ҫитнӗ тӑшман ҫине тӑхлан ҫумӑр йӑтӑнса аннӑ. Вӑл ӑна кӗтмен. Психически атака тӑвакансен стройӗ пӑсӑлса кайнӑ — вӗсенчен нумайӑшне пулеметпа автоматсем ҫулса тӑкнӑ, нумайӑшӗ хӑйсем выртнӑ, нумайӑшӗ каялла тарма тытӑннӑ. Хыҫалтан офицер хӑлаҫланса, персе пӑрахассипе хӑратса тем кӑшкӑрнӑ. Салтаксем ӑна итлемен, вӗсем вилӗм хӑрушлӑхӗ аллинче пулнӑ, офицерне тӗртсе ӳкерсех каялла тарнӑ.

Ҫапах та тӑшман пирӗннисем ҫине персе тӑма пӑрахман. Пулемет таврашӗнче унта та кунта мина ҫурӑлнӑ. Пӗр мина ҫывӑхрах ҫурӑлса кайнӑ. Ҫӳлелле юрлӑ, тӑмлӑ ҫӗр ҫӗкленнӗ. Тепӗр самантран куҫне уҫса пӑхсан, Смирнов хӑйӗн юлташӗсем пурте аманнине курнӑ. Вӗсем, ҫӗрпе хупланнӑскерсем, пӗр-пӗрне пулӑшма та пултарайман, йынӑшса-ҫеҫ выртнӑ. Ҫав вӑхӑтра нимӗҫсем иккӗмӗш хут атакӑна кӗнӗ. Смирнов аллине каллех гашетка ҫине пуснӑ. Пулемет ӗҫлеме тытӑннӑ. Пулемет ӗҫленӗ чух Смирновӑн хулпуҫҫийӗ те диск пекех выляса, чӗтресе тӑнӑ. Унӑн питне тар тапса тухнӑ, ҫӑварӗ типсе кайнӑ.

Тӑшманӑн иккӗмӗш атаки те пӑчланса ларнӑ. Аманнисене сӗтӗрсе, нимӗҫсем тӑвайккипе каллех аялалла аннӑ. Смирнов умӗнче юр ҫинче пӗр вӑтӑр вилене яхӑн хуралса выртнӑ.

Нимӗҫсем лӑпланман. Вӗсем Смирнова хирӗҫ йывӑр танк кӗртсе янӑ. Танк хыҫҫӑн, юр кӗрчӗ тӑрӑх пута-пута ларса, фашистсен пехоти пынӑ. Халӗ ӗнтӗ «Максим» пулеметпа пӗр пӗччен персе Смирновӑн йывӑр танка тата темӗн чул салтака хирӗҫ ҫапӑҫмалла пулнӑ. Уншӑн ҫапӑҫури татӑклӑ самант ҫитсе тӑнӑ. Ҫак самант ҫамрӑк лейтенант умне вӑл халиччен яланах хӑйӗнчен хӑвалакан ыйтӑва кӑларса тӑратнӑ. Мӗнле вилес? Айванла, вилӗм пурпӗрех ҫӗнтерессине пӗлсе унпа ним кӗрешмесӗр вилес-и е тӑшманпа юлашки юн тумламӗ тухиччен ҫапӑҫса вилес?

Вăл Сары Базаров енне çаврăнса пăхнă. Базаров сăрт айккипе хăйĕн çине тапăнса кĕрекен нимĕçсене хирĕç вĕçĕмсĕр персе тăнă. Унтан вăл хăйĕн хыçнелле, аманнă юлташĕсем çинелле пăхса илнĕ. Унта Петров:

— Лейтенант юлташ, акă патронсем, акă патронсем! — тесе кăшкăрса выртнă. Хăй вăл патронсене илсе пама пултарайман, ун ик алли те пўрнесемсĕр пулнă.

Смирнов хăйĕн тимлĕхне урăх нимĕнле япала çине те куçарман, куçĕсене танк çинчен илмесĕр аллисемпе çав-çавах гашета çине пуснă. Вăл танк çине пемен, ун хыççăн ĕлкĕрсе пыма тăрăшакан пехотăна çулнă. Сывă юлнă нимĕç салтакĕсем вара танка пăрахса вăрманалла тарма пикеннĕ. Танк та, хăйне пехота пăрахса кайнине кура, каялла çаврăннă.

Ĕнтĕ тылран нимĕçсем еннелле снарядсем шăхăрса иртме тытăннă. Кун тăрăх Смирнов пирĕннисем çапăçăва кĕме хатĕрленсе çитнине ăнланса илнĕ.

— Петров, чăт,— тенĕ вăл,— часах ак хамăрăннисем çитеççĕ.

Петров шăлне шатăртаттарса выртнă, кĕпине çурса унпа юнлă аллине çыхасшăн тапаçланнă.

Танк каллех контратакăна кĕнĕ. Ун хыçĕнчен паçăрхи пекех пехота пынă. Ку хутĕнче танк хăйĕн маршрутне улăштарнă, паçăр çут айккипе çаврăнса кайма тăнăскер, вăл халĕ, гусеницисемпе чанкăртаттарса, тўрех Смирнов позицийĕ патнелле пынă. Танк хыççăн, хăйсен виллисем урлă сикс-сике каçса, пехотинецсем чупнă. Танк пулемета тупса ун çине пеме тытăннă. Снаряд шартлатса çурăлнă. Пулемет сиксе илнĕ, вăйлă сывлăш хумĕ Смирнова аяккалла ывăтса янă. Часах ăна тăн кĕнĕ. Вăл аллисемпе пулемета ярса тытнă, анчах пулемет ĕçлемен. Шутласа тăма вăхăт пулман. Смирнов автомат илнĕ те нимĕç салтакĕсене тĕлле-тĕлле пенĕ. Танк çывхарнă. Смирнов çаплах пенĕ. Вăл гранатăсем илнĕ, вĕсене танк гусеницисем айнелле ывăтнă.

— Мс тата, мс тата!—тенĕ вăл,—ил, кўп, чыхăн...— Çавăнтах кĕтмен çĕртен сăвă калама пуçланă...

Ĕç ачи вăл. Çĕнĕ пурнăçа
Сыхласа виллĕ вăл çапăçса

Юн кайнине чараймасăр асапланса выртакан Петров ун çине тĕлĕнсе пăхнă.

— Аташать,—тенĕ вăл. Унтан вăл курми пулнă, пĕтĕм тавралăх вутпа, тĕтĕмпе хупланса ларнă. Хăлхана йĕрĕнтерсе мотор кĕрленĕ, гусеницăсем чанкăртатнă, танк пулемет расчечĕ çине кĕрсе кайнă.

* * *

Çĕп Сĕнтĕр çыннисем хăйсен ял çынни Иван Васильевич Смирнов вилни çинчен çуркунне ака умĕн пĕлнĕ. Фронтран, пулеметнăй рота командованинчен çыру килнĕ. Вăл кĕске çырура рота командирĕпе политрук Иван çемйи патне: «Сире... нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçнă çĕрте Иван Васильевич Смирнов паттăрсен вилĕмĕпе вилни çинчен пĕлтеретпĕр» тесе çырнă. Унтах героя пытарнă вырăн ятне асăннă, ăна хăй çапăçса вилнĕ çутран инçе те мар пытарнă.

Ял çыннисем Ваньăна лайăх астăваççĕ, пурте ăна ырă ятпа асăнаççĕ.

— Вилнĕшĕн питĕ шел. Анчах вăл чаплă вилĕмпе вилнĕ, урăхла вилме пултарайман та,—теççĕ ялта.

Ванькка пĕчĕкренпех ĕçре пиçнĕ çын пулнă. Вăл нимĕнле ĕçрен те йĕрĕнсе тăман. Эçукпа Куля пиччĕшĕсемпе кунĕн-çĕрĕн ашшĕпе амăшне пулăшнă. Ун пирки унăн амăшĕ Пелагея Кирилловна çапла каласа парать:

— Вăл пĕчĕккĕччĕ. Çураласса та пĕчĕккĕ çуралчĕ. Эпĕ ăна хырăмра çичĕ уйăх кăна йатса çӳрерĕм. Çуралсан вара ăна, ан вилтĕр тесе, ваттисем йăлипе кĕрĕк çанни ăшне чиксе хураттăм. Çапла ултă уйăх хушши çутă кăтартмарăм. Кăкăр параттăм та чиксе хураттăм. Çичĕ уйăхран утма вĕренчĕ. Ку та мана хăрататчĕ. Пăртак ӳсссенех ĕçе хутшăнчĕ: тыр выратчĕ, сӳре сӳрелетчĕ, вырьăх пăхатчĕ. Ĕçре те, вĕренӳре те Куля ятлă пиччĕшĕнчен пĕрре те ӳксе юлмастчĕ. Педтехникума пиччĕшĕпе пĕрлех вĕренме кĕчĕ. Лайăх вĕренсе тухрĕ. Унтан çара кайиччен Таябара хут вĕрентрĕ. Юрататчĕç ăна пурте, лайăх ачаччĕ вăл. Халь ак ăна вилнĕ, теççĕ. Çук, эп ăна ĕненместĕп, вăл вилме пултараймасть, çук, çук,—тет.

Тĕрĕс, Пелагея Кирилловна, сан ывăлу вилме пултараймасть. Сан ывăлу тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуçне хунă. Ирĕклĕхшĕн, пирĕн халăхăн пуласлăхĕшĕн вилнĕ çынсем — вилĕмсĕр. Тĕрĕс калать сан ывăлун юлташĕ политрук Курчавов. Астăватăн пуль мĕнле çырнăччĕ вăл хăйĕн çырăвĕнче:

«Аслă Отечественнăй вăрçă чарăнĕ. Артиллери сасси лăпланĕ. Çĕршыв хăйĕн суранĕсене тӳрлетĕ. Тăван çĕршывра çĕнĕ хуласем ӳссе ларĕç. Ун чухне хальхи ылханлă фашизм кӳнĕ асапсемпе хуйхă-суйхăсене те манса пырĕç. Анчах çав вăхăтра та совет халăхĕ хăйĕн паттăр ывăлĕ коммунист Иван Смирнов тунă чаплă ĕçсене манмĕ. Унăн ячĕ аслă халăхăн чаплă историйĕн страницисенче ылтăн пек çиçсе тăрĕ», тенĕччĕ. Тĕрĕс, халăх ун ятне нихçан та асран ярас çук.

